## Акăшсем

***Юрий Кудаков кĕвви***

Урама тухатăп, тӳпене пăхатăп –
Чунăма тивеççĕ тунсăх сасăсем.
Ăçталла каятăр, ăçталла васкатăр,
Шурă тутăр евĕр шурă акăшсем.

Çаралать çăкалăх, çухалать ман яшлăх,
Çулçă пек вĕçеççĕ ырă кунăмсем.
Мĕншĕн ир каятăр, мĕншĕн пит васкатăр,
Çутă ĕмĕт евĕр шурă акăшсем?

Чĕрери çеçкеçĕм тăкăнмасть тесеттĕм,
Шăпланмаççĕ теттĕм яшлăх каçĕсем.
Ах, мĕн-ма каятăр, ах, мĕн-ма васкатăр,
Шурăмпуç ачи пек шурă акăшсем?

*Сементер, Ю. Акăшсем: «Урама тухатăп, тӳпене пăхатăп…» : [юрă ] / Юрий Сементер сăвви ; Юрий Кудаков кĕвви // Сементер, Ю. Чăваш пики : юрăсем. – Шупашкар, 2002. – С. 88.*